ХЫПАР

# ТЕТТЕ
## ИГРУШКА

+0

1
2014



Ольга РАЙКОВА

**Сывӑ чухне пур апат та тутлӑ.**

**Живёшь каково и здоровье таково.**

Николай ИШЕНТЕЙ

# Хĕвеллĕ кӳлленчĕк

Эсир асăрханă-и: хăш-пĕр çыннăн йăл кулнă чухне пит çăмарти пăт путать. Тулли питлисен çакă пушшех те аван палăрать. Славик шăллăмăн та, улма питлĕскерĕн, пит çăмартинче унашкал лакăм пур. Кулнă чухне курăнкалать. Çак пулăм сăлтавне эпир пĕлетпĕр – пире асанне каланă. Хĕвел ачи юратса чуп тунăран пулать имĕш пит лупашки. Телей палли тет вăл. Çакна илтсен Славик питĕ савăнчĕ, унтан акă мĕн каларĕ:

– Петюк, атя эпир те ăна вăрттăн сăнатпăр.

– Кама?

– Хĕвеле ара. Вăл питрен чуп тунине эп сисмен-çке хальччен.

Эпĕ килĕшрĕм. Çуллахи пĕр хĕвеллĕ кун чечеклĕ çарана тухрăмăр. Çаран варринче тем пысăкăш шыв кӳлленчĕкĕ аякранах курăнать, куçа йăмăхтармалла йăлтăртатать.

– Чим, мĕншĕн кӳлленчĕк çутăлать-ха?– тăп чарăнчĕ Славик.

– Хĕвел ачи пытанман-ши унта? – иккĕлентĕм эпĕ те. – Атя тĕрĕслетпĕр.

Иксĕмĕр те систермесĕр йăпшăна-йăпшăна упаленетпĕр кӳлленчĕк еннелле. Хĕвел ачине хăратас марччĕ çеç.

– Курăнмасть, – тет шăллăм, маларах ĕлкĕрнĕскер. Çаврăнăçуллăрах пулнăшăн савăннă хăй, йăл та йăл кулкалать.

Эпĕ те çитрĕм. Пăхатăп – кӳлленчĕкре хамăрăн сăнсем çеç. Петюкăн пит çăмарти пăт путнă, манăн вара – çук.

– Ай, хĕвел ачи сана чуп тума та ĕлкĕрнĕ, – пĕлтертĕм шăллăма.

– Эх, каллех сисеймерĕм,– пăшăрханчĕ Славик. – Хăй вара çурăм хыçне пытаннă ши?

Ун-кун пăхсан та хĕвел ачине кураймарăмăр. Çу каçиччен темиçе хут та çакнашкал сăнав ирттертĕмĕр – пĕр усă та пулмарĕ. Славика питрен кам чуп тунине асăрхаймарăмăр.

Кĕр çитрĕ. Сивĕтрĕ. Пĕр ирхине çаран çине тухрăмăр та кӳлленчĕкри шыв талккăшпех пăрпа хупланнине куртăмăр. Çывхартăмăр.

– Пăрĕ яка та – унченхи пек йăлтăртатмасть,– хаш сывларĕ Славик.

«Çуркуннесĕр те телейлĕ пурăнаймăпăр-ши?» – мĕлтлетрĕ шухăш. Эпир пăшăлккă çӳренине анне курчĕ те:

– Пӳрт çывăхĕнчех каток пур – эсир мĕншĕн тута тăснă? – терĕ.

– Хĕвелсĕр кӳлленчĕкре мĕн савăнăçĕ, – тетпĕр.

Кӳренӳ сăлтавне пĕлсен анне пире коньки туянса пачĕ, ярăнма вĕрентрĕ. Нумай пулчĕ-и, сахал-и, конькипе ăмăртмалла ярăнма пуçларăмăр. Пирĕн кӳлленчĕк те «хĕвелсĕр» мар ĕнтĕ. Унăн хĕлхемĕ сăн-питре йăлтăртатать, кăмăла ăшăтать.

Хĕвел – çутăпа, çын ăс-тăнпа пуян. Халĕ шăллăмпа иксĕмĕр те çакна аван пĕлетпĕр: хĕвел ăшши пурнăçа çутатать, çын çынна телейлĕ тăвать.

Александр ПЛЕХАНОВ



## Ваттисем çапла калаççĕ:

- Хĕвел сутине чун сути теççĕ.
- Хĕвел пĕччен пулин те сут тĕнчене ăшăтать.
- Хĕвеле курсан кайăк та юрлать.
- Хĕвелтен çӳлерех пĕр кайăк та вĕçмест.

# ХАВАСЛӐ УРОК
# ВЕСЁЛЫЙ УРОК



**Художник йӑнӑшӗсене туп.**

Найди ошибки художника.



**Пӑнчӑсене пӗрлештер.**

Соедини точки.

*Ксения КОШЕЛЕВА*



**Ӳкерчӗкре миҫе вӗҫен кайӑк пытаннӑ-ши?**

Сколько птиц спрятаны на рисунке?

# Икĕ тус

Сашăпа Егорка паян та ача садне пĕрле çитрĕç. Тумтирне тирпейлĕн çакса хучĕç те выляв пӳлĕмне ушкăнри тусĕсем патне васкарĕç. Тĕрлĕ тĕслĕ çаврашка, тăваткăл тата виç кĕтеслĕ пайсем саркаласа пăрахрĕç те машина тума шухăшларĕç. Калаçса татăлчĕç те ĕçе пикенчĕç.

Шăкăл-шăкăл калаçать, чĕвĕлти мăшăр чĕкеç евĕр чĕвĕлтетет икĕ тус. Иккĕшĕн те пĕр чĕлхе. Хăйсем çеç аван ăнланакан чĕлхе.

– Еголка, атя машина тăвăпăл та ун çине нумай тетте хулса тултаăпăл, – тет ачаш та кăшт вăр-вартарах Саша. – Вала хытă-хытă инçете каятпăл. Юлать.

– Юйать, Саша, – хуравлать çепĕççĕн кăна Егорка. – Ыйан вайа тйактой тăвăпăй. Пы-ы-сăк тйактой. Ман кукка çӳйекенни пекки.

– Килĕшмелле, тусăм. Ылан тлактол çине темĕн те тийĕпĕл.

Нумайччен шăкăлтатса выляса ларчĕ икĕ арçын ача. Пĕчĕк ăстасем машина пуçтарма та вĕренсе пычĕç, кустăрмисене те, кузовне те, кабинине те тирпейлĕн хăйсен вырăнне лартма хăнăхрĕç. Чи кирли – килĕштерсе выляма пĕлни. Ун пек чухне нимĕнле чĕлхе те кансĕрлемест. Хальлĕхе вĕсем пĕчĕк-ха. Кĕçех кăшт ӳссе çитĕнĕç те кашни сăмахах уçăмлă та йĕркеллĕ калама хăнăхса çитĕç. Уншăн вĕсем тăрăшаççĕ те. Тăрăшулăхра вара çитĕнӳ яланах пулать.

## Ваттисем çапла калаççĕ:

- Тус çыннуна мулпа ан улăштар.
- Тус та тепĕр чух юс пулать.
- Тус, хăйматлăх нумай пултăр, тăшман сахал пултăр.
- Туслăх ĕçре палăрать.
- Тусу çук пулсан, тупма тăрăш, тупсан — упра.



# ХАВАСЛӐ УРОК
## ВЕСЁЛЫЙ




**Ҫакӑнта мӗнле сӑмах ҫырнӑ-ши? Ӑна вырӑсла куҫар.**

Какое слово здесь написано? Переведи его на русский язык.

*Мария АРЛАН*

**Примера шутла та шӑши тус хӑш сыр татӑкне ас тивсе пӑхма ӗмӗтленнине пӗл.**

Реши пример и узнай, о каком куске сыра мечтает мышонок.

*Ксения КОШЕЛЕВА*






**Кашкӑра лабиринтран тухма пулӑш.**

Помого волку пройти лабиринт.

# Вăйă-кулă уçланки
# Игровая поляна



**Юр кĕлетке мĕнле пайсенчен тăнине пĕл те кирлисене паллă ту, ячĕсене çыр. Çитмен пайсене ӳкер.**

Угадай, из каких деталей состоит снеговик? Нужное обведи, подпиши название. Недостающие детали дорисуй.

*Ольга РАЙКОВА*



**Кама мĕнле парне кĕтнине пĕл те стрелкăпа палăртса тух.**

Угадай, кому какой подарок ждет? Укажи стрелкой.

*Ксения КОШЕЛЕВА*

**Çак ӳкерчĕк мĕнле юмахран-ши? Кунта кам çитмест? Пахча çимĕçе туртса кăларайĕç-ши вĕсем? Çук пулсан, мĕншĕн?**



К какой сказке нарисован рисунок? Кого из героев не хватает? Смогут ли вытащить овощ без одного из персонажей? Если нет, то почему?

*Мария АРЛАН*





**Пушă вырăнта виçĕ пайĕнчен хăшĕ çитмест-ши?**

Какая из трех частей не достает аппликации?

**Шурă упа çурине пăр кермене çитме пулăш.**

Помоги белому медвежонку дойти до ледового дворца.

*Ксения КОШЕЛЕВА*



**Юр çинче мĕнле чĕр чун йĕрĕсем-ши? Йĕрсен «хуçисен» ячĕсене çырса тух.**

*Ольга РАЙКОВА*

Догадайся, чьи следы на снегу? Подпиши названия животных, которые их оставили.

## ВИҪĔ ЧĔЛХЕ – ВИҪĔ АС
## ИЗУЧАЕМ ЯЗЫКИ



Хĕлле
Зима
Winter
[Винтă]

Хĕлле раштав уйăхĕнче пуçланать
Зима начинается в декабре
Winter begins in December
[Винтă бигинз ин дисембă]

Хĕлле сивĕ
Зимой холодно
It ‘s cold in winter
[Итс коулд ин винтă]

Хĕллехи уйăхсем – раштав, кăрлач тата нарăс
Зимние месяцы – декабрь, январь и февраль
Winter months are December, January and February
[Винтă мансс аа дисембă, джэнюăри энд фебруăри]



Паян питех те илемлĕ кун!
Сегодня чудесный день!
It’s a wonderful day today!
[Итс э вандăфул дей тăдей!]

Юхан шывсемпе кӳлĕсем пăрпа витĕннĕ
Реки и озера покрыты льдом
Rivers and lakes are covered with ice
[Ривăз энд лейкс аа кавăд виз айс]



Юр çăвать
Идет снег
It is snowing
[Ит из сноуинг]

Кайăксене сивĕ тата вĕсем выçă
Птичкам холодно и голодно
Birds are cold and hungry
[Бăăдз аа коулд энд хангри]







Айта çунашкапа (йĕлтĕрпе) ярăнатпăр!
Давай покатаемся на санках (на лыжах)!
Let’s toboggan(ski)!
[Летс тăбогăн (скии)!]

Айта юрпа пемелле вылятпăр!
Давай играть в снежки!
Let’s play snowballs!
[Летс плей сноуболз!]



Айта кайăксене апат çитеретпĕр!
Давай кормить птичек!
Let’s feed birds!
[Летс фиид бăăдз!]

*Александр ПЛЕХАНОВ*

**Акăлчан чĕлхи урокне Галина ЗОТОВА (Хĕрлĕ Чутай районĕ, Штанаш шкулĕ) ертсе пырать.**

Урок английского языка ведет Галина ЗОТОВА (Красночетайский район, Штанашская школа).

Пирĕн пултарулăх
НАШЕ ТВОРЧЕСТВО



# Йĕлтĕрпе



Эп чупатăн йĕлтĕрпе
Вăрманти юрпала.
Шăн лараççĕ йывăççем,
Юрламаççĕ кайăксем.
Вĕçкелет шур юр пĕрчи –
Пит хитре вăрман тĕнчи.

Алина ВАЛЕРИАНОВА.
Шупашкар, 3-мĕш шкул.
Автор ўкерчĕкĕ.

# Хĕл çитрĕ

Килчĕ хĕл васкаса,
Таврана шуратса.
Мĕн тери хĕл хитре,
Савăк кулă питре.

Юрататăн хĕллене,
Унăн сивĕ илемне,
Тăвайккинчен ярăнма,
Юр кĕлеткесем тума.

Олеся НИКОЛАЕВА.
Элĕк районĕ,
Чăваш Сурăм шкулĕ.
Данил ГРИГОРЬЕВ
(Шупашкар районĕ, Çĕньял
Покровски шкулĕ) ўкерчĕкĕ.

# Ярăнмашкăн кăмăл пур

Варсенче эп ярăнатăн,
Вăрманта та, акă кур.
Пур çĕрте те эп васкатăн –
Ярăнмашкăн кăмăл пур.
Сар хĕвелĕ çутатать,
Йĕлтĕр пит аван шăвать.

Надя ГРИГОРЬЕВА.
Вăрмар районĕ,
Пысăк Енккасси шкулĕ.
АВТОР ўкерчĕкĕ.





# Йĕлтĕр шурĕ

Çитрĕ сивĕ хĕлĕ,
Шурă юрĕ çурĕ,
Вăл нумайййипе
Йĕлтĕр лайăх шурĕ.

Надя АРСЕНТЬЕВА.
Вăрмар районĕ,
Пысăк Енккасси шкулĕ.
АВТОР ўкерчĕкĕ.

# Сӗтел ҫи вӑйӑ
## Настольная игра

Оля ГЕРАСИМОВА




10
11
12
13
15
14
34
Огонек – пропусти ход;
Рыба – иди по стрелке;
(Звезда) – дополнительный ход
33
28
29
30
31
32
24

## ПОЭТСЕМ АЧАСЕМ ВАЛЛИ

Микул ПУЛАР

### Икĕ çăмха



Çăмхапа вылять кушак,
Хăй те çăмха пулнăн.
Тĕлĕнсе сăнать курак
Уйăрма май çукшăн.

### Чăпар автан



Кĕршĕри чăпар автан,
Мĕншĕн хытă авăтатăн?
Ыйăха ирех тататăн,
Кăшт кăна тăхтасчĕ сан.

### Шăтăк катка



Шыв йăтать ирех Куçук,
Шăтăк каткана.
– Ывăнтăм, – тет, – хал та çук.
Канăп пĕр кана.

### Харсăр куян



– Хăраман эп нихăçан! –
Тенĕ Тилĕрен Куян.
Хăлаçланнă вăл, туян,
Лешĕ чăх тытма кайсан.

Александр ПЛЕХАНОВ

# Пĕлесшĕн



– Мĕншĕн какаклатать хур?
– Мĕншĕн пĕлĕт кăвакарнă?
– Мĕншĕн-мĕншĕн? – ыйту панă
Йăлт пĕлес тесе Якур.

# Чи-чи-чи...



Чи илемли, чи хитри,
Чи сăпайли, чиперри,
Чи ĕçченни – Кулине –
Пĕл вăл: ман анне!

# Юлхав ача



Апат çимелле тесен
Васкасах çитет Çемен.
Ĕç пирки сăмах тухсан
Хыçĕнчен вĕçет тусан.

# Сухан



Петĕр ыйтать Палюкран:
– Мĕншĕн ĕсĕклетĕн?
– Манăн куççульне куран,
Кăларать сухан-мĕн.

Александр ПЛЕХАНОВ


РАСКРАСКА
Севиль МУСАЕВА
Сăрласа илемлет




# «НАШ ДРУЖНЫЙ КЛАСС» + «НАША ВЕСЁЛАЯ ГРУППА»



*Хĕрлĕ Чутай районĕ, Хĕрлĕ Чутай шкулĕ.*



*Йĕпреç районĕ, Пучинке шкулĕ.*



*Вăрмар районĕ, Кĕтеснер шкулĕ.*



*Шупашкар районĕ, Кӳкеç шкулĕ.*



*Вăрмар районĕ, Вăрмар шкулĕ.*



*Канаш, 6-мĕш шкул.*



*Канаш, 11-мĕш шкул.*

# Хаваслă кăранташ

## ВЕСЁЛЫЙ КАРАНДАШ



*Родион АЛЕКСЕЕВ.*
*Сĕнтĕрвăрри районĕ, Карапаш пуçламăш шкулĕ.*



*Арина КРАСНОВА.*
*Шăмăршă районĕ, Пуянкасси.*



*Юлия АНТОНОВА.*
*Шупашкар, 49-мĕш шкул.*



*Света ШМЕЛЁВА.*
*Йĕпреç районĕ, Çăкалăх.*



*Валерия ИЛЬИНА.*
*Шупашкар, 27-мĕш шкул.*



*Наташа АНТОНОВА.*
*Шăмăршă районĕ, Пуянкасси.*

# Хаваслă кăранташ

## ВЕСЁЛЫЙ КАРАНДАШ



*Софья АБРОСЬКИНА.*
*Шупашкар, 6-мӗш шкул.*



*Владик БАЛАШОВ.*
*Шупашкар, 35-мӗш шкул.*



*Настя ШУРНЕЕВА.*
*Муркаш районӗ, Юнкăпуҫ шкулӗ.*



*Денис ПАВЛОВ.*
*Вăрмар районӗ, Пысăк Енккасси шкулӗ.*



*Лилиана ЕГОРОВА.*
*Шупашкар, 39-мӗш шкул.*



*Настя МИРОНОВА.*
*Элӗк районӗ, Питӗшкасси.*

# Чечек илемĕ



Кŭршĕре пурăнакан Вальăна ўкĕте кĕртме питĕ йывăр. Ялан хăй пек тăвасшăн вăл. Паян кŭршĕри Марук аппана пулăшма каяссине пĕлтерсен вăл тутине тăсрĕ.

– Сăртран çунашкапа ярăнасшăнччĕ. Пĕччен кичем, – мăкăртатрĕ лăпланаймасăр.

– Кинемие пулăшар-ха, авă, унăн витре тĕпĕнче ĕçме пĕр курка шыв та юлман терĕ. Кĕленчене тултарас та каяс ун патне, – пĕлтертĕм хам шухăша çавăнтах.

Марук аппа патне тусăм та пычĕ. Чирлесе ўкнĕ кинемее тĕрлĕ ĕç туса патăмăр. Вăл вара питĕ хĕпĕртерĕ. Пылак кучченеçпе сăйланă хыççăн мана хут тĕрки тыттарчĕ.

– Ачам, çав тери хитре чечек вăрри ку. Аннўне пар, çуркунне çитсен пахчана лартма ан манăр. Тавралăха илем парнелекен çеçке вăл, – терĕ ырă сунса.

Урама тухсан тусăм яланхиллех мăкăртатма тытăнчĕ.

– Мана валли санăн нихăçан та вăхăт çук, ыттисемшĕн вара тем тума та хатĕр, – терĕ çаплах чарăнма пĕлмесĕр.

...Çурkуннехи хĕвел ăшшипе аннепе пахчара кăштăртататпăр. Эх, мĕн тери шеп-çке çанталăкĕ! Ниçта та пĕр çил пĕрчи çук. Кайăксен илемлĕ юрри пушшех кăмăла çĕклет. Ялан сунара çўрекен Мурка кушакăм та ав пирĕнпе. Эпир мĕн тунине куç илми пăхать. Сасартăк таçтан сап-сарă лĕпĕш вĕçсе килчĕ те карта çине ларчĕ. Пит-куçне çуса ларакан мăр-мăр асăрхарĕ, тытăнчĕ хăвалама! Ак Марук аппа панă чечек вăррисене тем вăхăтра сирпĕтсе ячĕ вăл. Эпĕ алăри кĕреçене пăрахсах унталла чупрăм. Шурă хут çинче пĕр пĕрчĕ вăрă юлманран куçăм куççульпе тулчĕ.

– Ан-не-е-е! Кăçал пирĕн пахча хитре-е-е пулма-а-асть! – кăшкăрсах ятăм ним тăвайман енне.

Шанăça çухатмарăм. Киле чупса кĕтĕм те куçлăха тăхăнса хура çĕр çинче вăрăсене шырама тытăнтăм. Шел, виçĕ пĕрчине кăна тупрăм. Вĕсене каллех кушак çухатасран шикленсе тўрех акса ятăм.

...Виçĕ чечек ўсет пирĕн пахчара. Ак ĕнер хĕп-хĕрлĕ çеçке те çурчĕç. Марук аппа калани тĕрĕсех пулчĕ. Пирĕн пахча пушшех илемленсе кайрĕ вĕт! Вĕсене эпир кăна мар, пыл хурчĕсем те кăмăлласçĕ. Кашни кун çеçке çине килсе ларса сĕткен пухаççĕ. Пĕр кунхине вĕсен сулхăнне чĕрĕп те килсе выртрĕ.

– Ах, çут тĕнче мĕнле хитре иккен! Сирĕн çеçкĕрсене кунĕпех пăхса ларас килет. Чĕрĕп те тутлă шăршă саракан чечеке ытараймасăр пахчана килнĕ. Лисук, атя ыран каллех Марук аппа патне. Тен, вăл пире каллех çакнашкал парнепе савăнтарĕ? – терĕ тусăм та пĕр кунхине хĕпĕртесе.

Çапла çав: илем пурне те хăй патне туртать.

***Ксения КОШЕЛЕВА (ЧР, Йĕпреç районĕ, Çăкалăх) ўкерчĕкĕ.***

## УМЕЛЫЕ РУЧКИ
## ĂСТА АЛĂСЕМ

# Жираф



*По схеме вырежи развертку жирафа, сложи по линиям сгиба и собери по схеме. Успеха вам, дорогие ребятишки.*

*Тамара* ФИНОГЕНТОВА

# Пирĕн тăрăхри ӳсен-тăран

*Александр ПЛЕХАНОВ*

**Юман – Дуб.** Çак йывăçăн ик çĕре яхăн тĕсне тупса палăртнă. 20-30 çул яка хупăллă пулса çитĕнет. Ун хыççăн хуппи çуркаланать те путăкланать. Юман çимĕçĕ – йĕкел. Çак йывăç 400-500 çул таран пурăнать, хăшĕсем вара пин çула та çитеççĕ.





**Хăва, çӳçе, йăмра – Ива.** Виç çĕр çитмĕл тĕслĕ тĕл пулать. Чăваш çĕр-шывĕнче çирĕме яхăн тĕс çитĕнет. Час-часах тĕл пулаканнисем: йăмра, вăрăм хăва, хăва, çӳçе. Ака-çу уйăхĕсенче çеçкене ларать. Сивве тӳсме пултарать, хĕрĕх çула яхăн çитĕнет. Пыл хурчĕсем валли сĕткен нумай паракан йывăç.

**Çăка – Липа.** Çĕр чăмăрĕн çурçĕр пайĕнче çак йывăçăн 45 яхăн тĕсĕ çитĕнет. Çӳллĕшĕ 30 метра çитет. 300, тепĕр чухне 600 çул таран пурăнать. Сулхăна, сивве чăтакан йывăç. Çăка çеçкипе медицинăра анлă усă кураççĕ. Чăваш Енре çăка йывăççин лаптăкĕ 59 пин те 500 гектара яхăн.




*Дорогие родители!*

*Подписку на журнал можно оформить с любого месяца, в любом отделении почты, киосках ОАО «Чувашпечать» и редакции.*

*Индексы 73771 (в республике)  11468 (за пределами республики)*



© «ТЕТТЕ - Игрушка»
Кĕçĕн çулхи ачасен журналĕ
Журнал для детей дошкольного и младшего школьного возраста
На чувашском и русском языках
Индексы 73771 (в республике), 11468 (за пределами республики)
1994 çулхи çурла уйăхĕнченпе тухать
Издается с августа 1994 года
УЧРЕДИТЕЛЬСЕМ:
Чăваш Республикин Информаци политикин тата массăллă коммуникацисен министерстви; Чăваш Республикин Информаци политикин тата массăллă коммуникацисен министерствин «Хыпар» Издательство çурчĕ» Чăваш Республикин автономи учрежденийĕ.
УЧРЕДИТЕЛИ:
Министерство информационной политики и массовых коммуникаций Чувашской Республики; АУ Чувашской Республики «Издательский дом «Хыпар» Мининформполитики Чувашии.
1 (233) №, кăрлач (январь), 2014

Директор-тĕп редактор – А.ЛЕОНТЬЕВ
Шеф-редактор – В.ФЕДОРОВ
Компьютер дизайнĕ – Ф.ЧЕРНОВ
Наш адрес: 428019, г.Чебоксары, проспект Ивана Яковлева, 13, Дом печати. Телефоны: 56-00-67, 28-83-86
Наш сайт: www.tst.smi21.ru. Электронная почта: tantas@list.ru
Журнал «Тетте-Игрушка» зарегистрирован Управлением Федеральной службы по надзору в сфере связи, информационных технологий и массовых коммуникаций по Чувашской Республике (Роскомнадзор) – свидетельство о регистрации СМИ ПИ № ТУ21-00311 от 12.12.13 г.
Территория распространения — Чувашская Республика – Чувашия.
Цена свободная.
Журнал набран и сверстан в техническом центре ИД «Хыпар», отпечатан в типографии ГУП ЧР «ИПК «Чувашия» (428019, г.Чебоксары, проспект Ивана Яковлева, 13).
Подписано к печати 28.01.2014. Дата выхода в свет 31.01.2014.
Формат 60x84, Усл. п.л. 2,32.
Тираж 6323 экз.  Заказ № К – 160.